Эс пирĕншĕн ĕмĕрлĕх чăнлăх,
Сассу та янравлă шăнкрав.

Вилмен эсĕ, Çеçпĕл, пурнатăн,
Чĕрӳ сан тапма чарăнман,
Хĕвел пек çиçсе эс тăратăн,
Ялавăн курнатăн ялан.

Пĕр харăссăн Улăп пек утăр,
Хастарлă чăваш ачисем,
Ялан харсăр Çеçпĕл пек пулăр,
Ан юлăр кун-çул уттинчен!

**ЧĂВАШ МАРШĂН ЭПĔ КАМ-ШИ?**

Чăваш маршăн эпĕ кам-ши?
Ытти çынсем хушшинче,
Тен, мана та курнă пуль,
Ятăма та илтнĕ пуль,
Илтнĕ пуль те маннă пуль.
Ма тесессĕн эп вĕсемшĕн
Нимле пысăк пуçлăх мар,
Укçа тӳлекен те мар,
Хваттер паракан та мар.
Ма тесессĕн ыттисем,
Унтан-кунтан килнисем
Эп çырнине вулайман,
Ман юррăма юрлайман.
Ăçтан пĕлччĕр эп камне,
Мĕнлерех çын пулнине?
Хĕрхенетĕп вĕсене,
Чунпа чухăнскерсене.
Ĕмĕр сакки мĕнлине,
Пурнăç тути-масине,
Мĕнле пурăнмаллине
Чухлаймаççĕ чăваш пек.
Тен, çавăнпах çич ют пек
Халь çӳреççĕ Чăвашра
Сăмсисене каçăртса,
Хăйсене мăнна хурса.
Çӳрекенсем – çӳреччĕр,
Тиркекенсем – тиркеччĕр.
Пирĕн хамăр пурнăç пур,
Пирĕн хамăр Туррăм пур,
Юттисемшĕн эп çукки,
Вĕсем мана пĕлменни,
Маншăн ниме те тăмасть,
Чунăм пĕртте ыратмасть,
Пĕрле тăрса юрлама
Манăн тăван халăх пур,
Чĕререн мăнаçланма
Маншăн Чăваш Тĕнчи пур.

# P. S. (хыççăмах)

# «Чăваш пулма йывăр мар»

Ĕç сĕтелĕ çинче – шăналăк пек шурă хут, унта вара – пĕр тымартан ӳссе сылтăмалла-сулахаялла кармашакан туратсем.

**– Анатолий Ильич, йăх-несĕл йывăçне юбилейăр çывхарса пынă май ӳкерме пуçăнтăр-и?**

– Шухăшĕ вăл тахçанах пулнă-ха. Хăш-пĕр турата ӳкерсе хăш-пĕр çын ятне çырса хуни ман чылай пуçтарăнса çитнĕччĕ. Кăçал туса çитересшĕн ĕнтĕ пĕтĕмпе. Тĕрĕссипе каласан, студентсене çак ĕçе тума 35 çул хăнăхтарса пытăм. Эпĕ этика, эстетика, философи вĕрентнĕ те – эстетикăпа зачет илес тесен студентсен хăйсен несĕл йывăççине тумалла пулнă. Вĕсем ăна, йывăр ĕç тесе, пит кăмăлласах йышăнмастчĕç. Мĕнле тумаллине кăтартса парсан, хăйсем кăштах ĕçлеме пуçласан вара хаваспах кĕрсе каятчĕç. Хăшĕ-пĕрин

аллăшар çын пухăнатчĕ, теприсен – çĕршер... Ик çĕршер çын тупаканнисем те пулнă. Тĕлĕнтермĕшсем те пулкалатчĕç: хăйсем университетра пĕрле вĕренеççĕ, пĕр йăхран пулнине пĕлмеççĕ иккен. Çав несĕл йывăççине тунă чухне вĕсем пĕр-пĕрин тăванĕсем патне сиксе тухрĕç.

**– Хăвăрăнни патне халь тин çитрĕр пулать...**

– Хамăнне эпĕ студентсем пек мар, тĕплĕрех тăвасшăн. Студентсем вĕсем ыйтса пĕлсе тăваççĕ, а эпĕ – архиввра ларса. Ман пĕтĕмпе илсессĕн (хам мăнука кĕртсен) 11 сыпăк пулать. Атте енчен чи ватти Лекçей ятлă пулнă. Вăл 1745-мĕш çулта çуралнă. Ун ывăлĕ Çемен пулнă. Çавăнпа пире Сименюк йăхĕ теççĕ. Пирĕн çур ял (Канаш районĕнчи Кипеч тăрăхĕнчи Чулкăмака ялĕ) – Сименюк йăхĕ. Сименюкăн ывăл нумай пулнă. Ун ачисен – татах та... Халь эпĕ ваттисене мĕн пĕлнĕ таран туса çитернĕ-ха, анчах та хампа пĕр çултисен ачисен ачисене пĕлместĕп. Вĕсемпе яла кайсах ĕçлемелле пулать. Вара – шухăш тытрăм та – анне енчен те тăвас терĕм. Каллех архиввра лартăм, шырарăм, тупрăм. Анне енчисен – Иванюк йăхĕ, Энтриялĕнчен, хамăр районтанах... Несĕл йывăçне ӳкересси маншăн тĕп ĕç мар, ыттине тунă хыççăн кăшт канса илмелĕх кăна.

**– Ăнланмалла, çапах та çулсем иртнĕçемĕн çак ĕç хăйне майлă тĕп ĕç пулса тăрать пуль. Хальччен туни, унпа танлаштарсан, сахал та пек туйăнать.**

– Чăнах, йăх-несĕл хăватне ăнланма самай вăхăт кирлĕ.

**– Эсир кунта та, хулара, ялти пек пурăнма тăрăшни урамранах курăнать: çурт йĕри-тавра – хăвăр лартнă йăмрасем, чечексем.**

– Чăвашла пурăнма тăрăшатпăр. Çавă сисĕнет пулĕ.

**– Чăваш пулма, чăвашла пурăнма йывăр-и хальхи вăхăтра?**

– Хăвăнпа пĕр шухăшлă çынсем пур чухне, тус-юлташ пур чухне – йывăр мар. Шупашкарта икĕ тĕрлĕ пурнăç вĕт: пĕри – чăваш пурнăçĕ, тепри – ыттисен. Унтан-кунтан килнисем – вĕсен кунта несĕлĕсем те, тăванĕсем те çуккă – лайăх хула тесе килсе кĕреççĕ те, хваттер илеççĕ те пурăнаççĕ кунта. Хамăн пĕр прозăлла сăвăра çапла каланăччĕ эпĕ вĕсем çинчен: "Ĕмĕр сакки мĕнлине, пурнăç тути-масине, мĕнле пурăнмаллине чухлаймаççĕ чăваш пек, тен, çавăнпах çич ют пек халь çӳреççĕ Чăвашра сăмсисене каçăртса, хăйсене мăнна хурса". Эпир вара хамăр тăван килти пек пурăнма тăрăшатпăр. Кунта пирĕн хамăрăн чăваш пурнăçĕ пур. Чăвашăн хăйĕн ĕмĕчĕсем, уявĕсем. Республика кунне, хула кунне, чăваш чĕлхи кунне, юбилейсене ирттеретпĕр, палăксем патне тухатпăр... Чăваш пурнăçĕ кашни утăмрах курăнса тăрать.

**– Çӳлĕк çинче этнопедагогика çинчен çырнă кĕнекĕре асăрхарăм. Çавна кура ыйту-шухăш çуралчĕ. Ватăсенчен вĕренсе пырасси, ăс-пурлăха çамрăксене парса хăварасси хальхи вăхăтра авалхи пек чипер пулса пыраймасть. Çамрăксем паян пач урăхла, хăйсем кăна пĕлекен пурнăçпа пурăнаççĕ, ваттисем вара вĕсене ăнлансах та каяймаççĕ пуль.**

– Ку енĕпе ман шухăш кăшт урăхларах. Хамăрăн паллă этнопедагог Геннадий Волков теорийĕ ваттисен вĕрентĕвĕ çинче тытăнса тăрать. 19-мĕш ĕмĕрти педагогика сĕмĕ пур унта.

**– Вăл паянхи куншăн юравлă мар тесшĕн-им эсир?**

– Эпĕ çапла каласшăн: этнопедагогикăн хăйĕн улшăнса пырас пулать, ватăсен те улшăнса пымалла. Паянхи этнопедагогикăн тĕллевĕсем те, меслечĕсем те урăхларах. Ашшĕ-амăшĕ, аслашшĕ-асламăшĕ ачисемпе мăнукĕсене

хăйсем пек тăвасшăн, тепĕр чухне каялла туртасшăн. Эпĕ хамăн кĕнекесенче çапла чĕнсе каланисем те пур: эсир, ваттисем, хăвăр çĕнелсе пырса çамрăксене паянхи куна ăнланса илме пулăшмалла! Халь эпир истори тĕлĕшĕнчен питĕ лайăх тапхăрта пурăнатпăр. Пирĕн ĕмĕрте хăйне майлă революци пулса иртрĕ, патшалăх системи улшăнчĕ. Унччченхи вăл кая тăрса юлчĕ ĕнтĕ. Апла пулсан ватăсем пĕрмаях унччченхине ырласа çеç калаçни хальхи çамрăксемшĕн усăллă япала мар. Иртнине пĕлмелле, çапах та паянхи кун мĕн ыйтнине, мĕн тума хушнине пурнăçламаллах. Тĕрлĕ ыйту çине хурав тупма пулăшмалла çамрăксене. Эпĕ çапла каласшăн: ваттисен хăйсен кăштах çамрăкланма тăрăшмалла.

**– Калама кăна канас... Китайра çынна усал суннă чухне "санăн самана улшăннă вăхăтра пурăнмалла пултăр!" теççĕ. Пире, паллах, çак вăхăтра пурăнма тивет. Çамрăкĕсем хуçалмаççĕ пуль-ха, вĕсем çĕнĕ самана сывлăшĕпе сывласа ӳсеççĕ. Ваттисем вара... Вĕсен пĕтĕм пурнăçне вăтăрса кăларса çĕнĕ çĕре куçарса хунă пек, тепĕр пахчана кайса лартнă пек туйăнать.**

– Тĕрĕссине калас-и? Мана çак пурнăç йĕрки улшăнни калама çук пысăк хăюлăх пачĕ. Калавсенче, сăвăсенче, юрăсенче, повеçсенче, пьесăсенче, романта эпĕ ним шикленсе тăмасăр çырма тăрăшрăм. Çакна тума мана паянхи пурнăç йĕрки пачĕ. Унччченхи патшалăх тытăмĕ пулнă пулсассăн Кибеч пачах та пулмастчĕ вăл. 80–90-мĕш çулсенче эпĕ çине тăрсах литература ĕçне кĕрсе кайрăм та – ман ĕç питĕ тухăçлă пулса пычĕ, çулсерен кĕнеке тухса тăчĕ, кăçал иккĕ те тухрĕ. Пурĕ вăтăр кĕнеке пухăнчĕ. Эпĕ вĕсен шучĕпе мухтанмастăп. Манăн тĕплĕ ĕçлес килет. Эпĕ пĕлетĕп: вулакан çакăн пек çырнине кăмăллать. Хамăн кĕнекесене вуланине те пĕлетĕп эпĕ, библиотекăсенче мана çĕтĕлсе кайнăскерсене кăтартаççĕ. Çав вăхăтрах хăш-пĕр авторăн алă пырса тĕкĕнмен кĕнекисем çӳлĕксем çинче шăкăринех тăраççĕ.Эпĕ хальхи çыннăн пурнăçне, чун туртăмне, шухăш-сисĕмне тишкерме, ăна тĕплĕнрех уçса пама тăрăшатăп. "Кун пек пулсан кун пек тумалла мар" тесе вĕрентместĕп эпĕ. Вĕрентсе каласси вăл искусство ĕçĕ мар, шухăша сăнарсем урлă ытарлăн уçса памалла.

Вăт çапла – тепĕр чухне эпир хамăр хаклама пĕлместпĕр 90-мĕш çулсем пире мĕнле уçă варкăш панине. Акă, ентешлĕх юхăмне чĕртсе ятăмăр. Тăван енсемпе питĕ çирĕп çыхăнусем йĕркелерĕмĕр. Эпĕ хам канашсен ентешлĕхне 18 çул ертсе пыратăп. Пĕр вăхăт пĕтĕм ентешлĕхсен канашне те ертсе пытăм. Пуçтарăнса, канашласа, туслă ĕçлетпĕр ертӳçĕсемпе. Çакă каллех тепĕр шухăш патне илсе çитерет: пире унччен питĕ уйăрса усранă пĕр-пĕринчен. Куратăр вĕт – чăваш чăваш еннех туртăнать, Мускавра-и, Питĕрте-и, Красноярскра-и, Тюменьте-и, Эренпурта-и, Самарта-и, Хусанта-и, Чĕмпĕрте-и, Ĕпхӳре-и – чăвашсем кĕрр! кăна пухăнаççĕ, уявсене пĕрле ирттереççĕ, пĕр-пĕрне асăрхаса-пулăшсах тăраççĕ. Икĕ-виçĕ кĕнекере те каларăм: эпĕ чăвашсем туслă мар тенине ĕненместĕп. Туслă мар халăхсем тахçанах пĕтнĕ вĕсем. Енчен те çак тарана çитиччен халăх пурăнать пулсан, пире çăлса хăвараканĕ – туслăх, пĕр-пĕрне пулăшни, мĕншĕн тесен эпир тăванлăха, йăхнесĕл тымарĕсене манмастпăр.

**Татьяна ИЛЬИНА тĕл пулса калаçнă**